Хакĕ 5 пус.

# Капкăн

1931 ● НОЙАПĔР ● 22



**Лаша.** Ех-хе-хей, хĕле тухрăмăр та, ĕç тупаймастпăрçке!..

**Вăрман хатĕрлекен.** Ех-хе-хей, вăрманне касрăмăр та, турттарма лашасем çукĕçке!..

# М Ы С К А Р А

## 2 КАРТТИНЛĂ ПĔЂĔК ИНСТСЕНИРОВККĂ

**Выђакансем:**

**Вере**—Ђухăн хĕрарăм. Тăлăхскер.
**Шатра Макçăм**—Кулак. Кулăшла мăнхырăмлă тумлантармалла.
**Такка**—Йалти комсот пуçлăхĕ.
**Авраӊ**—Пушталйон.
**Мишкă**—Вере ађи.

---

### ПĔРРЕМĔШ КАРТТИН

Ђăршав йерипен уçăлаҭ. Вере хуллен мăкăртатса йурласа урай шăлаҭ. Макçăм кĕрет.

### I-мĕш курăнни.

(Вере тата Макçăм).

**Макçăм:** Турă пулăштăр, Вере инке!

**Вере:** Спаççипă, Макçăм, хăта. Иртђĕ малалла.

**Макçăм** (алăк патĕнђенех). Йуратсkе кунта та...

**Вере:** Урайне... Çуп-çап тулнă та... Çавсене хуҭерес терĕмçке пăртак.

**Макçăм:** Кирлĕ вăл та... Тасатас пулаҭ.

**Вере:** Ара, вăл, хĕрарăмăн ĕçĕ çавă та...

**Макçăм:** Çапла, епĕ, (йăпăлтатса) Вере инке... А, есĕ, инке... Малашне те турра манмастăн пулĕ тетĕп епĕ...

**Вере** (хыпалăнђăклăн). Е-е, турçырлахтăр анђах Ара. турра мансан вара...

**Макçм:** Çапла, инке... Вилиђђенех турра манар марха ĕнтĕ.

**Вере:** Çырлахтăрах анђах! Ђĕр пуçпах турра ман. мăпăр тсха...

**Макçăм** (хуллентереххĕн). Инке, хăвах пĕлетĕн есĕ.

**Вере:** Мĕн?

**Макçăм:** Епĕ ђиркў укçи пуçтарма тухнă та.

**Вере:** Апла...

**Макçăм:** Ђиркў пĕтĕмпех хăрса çитнĕ... Кĕçех йăваланса та каймалла ĕнтĕ. Çавăнпа, епĕ, сирĕнген турра ĕненекен çын, тесе укçа пуçтарма тухрăм.

**Вере:** Йураҭха вăл...

**Макçăм:** Есĕр те пулăшмăрши тетĕп те...

**Вере** (хыпаланса, ним тума аптраса). Ех, çырлахтăр анђах,—ку укçа-тенкĕпе... унта та, кунта та парас пулаҭ. Ниçтан та саплаçа çитермелле мар. Мĕн курасах ĕнтĕ. Сайом та çырăнмалла...

**Макçăм** (айăккинелле). Çук... халăх турра манмах пуçларĕ. А, итлеха кин!

**Вере:** Е е.

**Макçăм:** Санăн ĕлĕк çырăнни те пур вĕт сайом?

**Вере:** Пур та...

**Макçăм:** Пур пулсан, мĕн темĕçе хут çырăнмалла ăна? Пĕрре çырăнипе çитет ĕнтĕ...

**Вере:** Çапли çапла та...

**Макçăм:** Сайом çырăнађђен, ђиркўне пулăшсан çўлти турăран сăвап пулĕ хăвна... Сайом çырăнса кама усă пултăр? Шутлаха, хăвах, инке! Мĕн усси пулђĕ сана сайом çыранса? Нимĕн усси те пулман вĕт? Е-е, вăл Советпа... Выçтарсах вĕлерет пулĕ таха мăнтарăн Совеҭĕ?.. Хапрăк-савăтсем... темĕн ђĕмерисем тăватпăр теççĕ те... Е йай йай, укçа парсах ĕнтĕ вĕсене...

**Вере:** А-а, итлеха, Макçăм хăта?

**Макçăм:** Вара...

**Вере:** Колхоссем тата, трактăрсене ăçтан илеççĕ тетĕн есĕ? Е-? Колхоссем хăйсем тумаççĕ вĕт трактăрсене?

**Макçăм** (айăккинелле). Çук, ырра мар, пур те коллоспа аташа пуçларĕç! . (хытăнах) А, итлеха, кин!

**Вере:** Ну?

**Макçăм:** Колхоссемпе лĕпĕртетме пăрахха есе! Хаҭ те такам тем каласан та сайомран ырринех курас çук есĕ...

**Вере:** Мĕнле вара, Совет та улталăши? (Тăхтаса), Тăхтаха, хăта, сайом укçине пуçĕпех илмеççĕ вĕт? Кайран каллех таварĕсе параççĕ уна. Çитменнине сайом опликатсисемпе укçа та выђаса илмелле.

**Макçăм** (ним калама аптраса)... Есĕ ĕненетниха вĕсене?

**Вере:** Çук, улталамаççĕ пуђ...

**Макçăм:** Каккуҭ çĕнĕ сайом çырăнма та... Пĕлтĕр çырăнна опликатсисене те сутас пулаҭ. А есĕ пур татах çĕнĕрен çырăнасшăн..,

**Вере:** Никама сутма та çукçке... Никам та илекен çук.

**Макçăм:** Е-ей, есĕр, сутма майне пĕлместĕр. Ак вăт, комсот патне, Такка патне кай та кала:—сайом илĕр, те. Епĕ хĕрарăм, ђухăн, тăлăх, те. Мишкă ђирлерĕ тесе маҭрăран пекки пул та, хăйсемех укĕте кĕреççĕ вара.

**Вере:** А, ман Мишки акроном ҭыхи пекех сывă, выђаҭ, кулаҭ. Аташаҭ çеç...

**Макçăм:** Е ей, кам пырса тĕрĕслекев пур сана?. Ĕне ђирлерĕ, те есĕ. Сĕт памасҭ, те.

**Вере:** Итлеха, хăта, пустуй суйăшăн турă асаплантарми тата?

**Макçăм:** Çу-ук, пустуйа ăн калаçха есĕ. Хуна пушшĕ сăвап пулаҭ унăшăн...

**Вере:** Мĕнле?

**Макçăм** Мĕнле, тетĕн есĕ. Акă, вăт мĕнле...

**Вере:** Ну...

**Макçăм:** Опликатсисене сутнă укçине ђиркў йусанă çĕре парсан, турă хăйех каçараҭ сана. Çўлти патшалăха йарĕ сана, сăвап пулĕ хăвна.

**Вере** (ним тума та пĕлмест). Епĕ, хăта...

**Макçăм:** Мĕн?

**Вере:** Кршикă патне çыру çырса ыйтса пăхамха ун пирки. Вăл мĕн хушса йараҭ. Вăл ђылай ăс паракавђă пире.

**Макçăм** (ĕтĕхлесе). Ĕ-ĕ есĕ, ухмах кин...

**Вере:** Мĕншĕн?

**Макçăм:** Есĕ çыру çырса кайалла ответ килеђђен, кам пĕлетха... Вăрçă та тухма пултараҭ унђђен... А, вăн, хаçатсем çивђе те ырринех çырмаççĕ... Кайран вара опликатсисене те никам та илмест.

**Вере** (Макçăма укĕтлене). Ураҭ, епин...

**Макçăм** (хаваслан). Тахçанах сутмалла санăн уна.

**Вере:** Йĕкĕсĕк сайомĕсемпе çĕтĕкех тăрса йулмалла пулĕ тата...

**Макçăм:** Çапла, шанма та çук... Ав, вăн, ырă çынсем (хусамăр йалти куштан,-пуйан йаҭĕсене, сайом çырăнман çын йаҭĕсене каламалла) пĕрте çырăнмаççĕ...

**Вере:** Сутатăпах ÿнтĕ вĕçене!.. Пĕтĕмпех сутатăп.

**Макçăм:** Ну, епĕ килтĕм те нумай тăтăмха тата? (Кайма хатĕрленет) Епĕ, кайамха, ҫилер йулăр.

**Вере:** Ҫипео кай, кайран кил.

**Макçăм:** Епĕр килетпĕр кунта, хусамăр пырăр пирĕн пата. (Алăк патĕнҫе ҫаранса)—Есĕ, кин, Таккапа хытă суйеçтер. (Тухат).

**Вере:** Йурат...

## 2-мĕш курăнни.

(Вере пĕҫҫенех)

**Вере:** Е ей, йĕксĕк, ку сайомпа... (Опликатсисене шкапран йе арҫаран кăларат) Тем те курса лармалла пулĕ ку сайомсемпе... Килте ларнă çерте нимĕн те пĕлмелле мар, йĕркене те кĕместĕн...

**Халех** кайса сутас кусене... (Хыпаланса) Кришкă ҫирленĕ, вырăнпах выртат. Ĕне те наҫар, сĕт кирлĕ, тетĕп... Кайатăп та сутатăп!.. (Тухса кайат. Пăртакранах пуштальйон кĕрет).

## 3-мĕш курăнни:

(Авраҫ)

**Авраҫ:** Никам та çук-им? (халăхсем йенелле çыру кăтартса). Акă, Вере кин патне ывăлĕнҫен çыру килнĕ. Парăр ува! (Куракансенҫен пĕрне парса хăварат).

**Пĕр çын:** Йурат. (Пуштальйон тухса кайат).

## 4-мĕш курăнни:

(Пĕр çын пĕҫҫенех)

**Пĕр çын:** Ей, итлĕрха, кришттăнсем. Вере кин патне ывăлĕнҫен çыру килнĕ. Айăр, вуласа пăхатпăр. Итлеттĕри есĕр?

**Сасă:** Итлетпĕр!

**Пĕр çын:** (Вулат). „Сывăл, йуратнă анне,“ мĕнле пурнатăр? Сире ушкăнпех хĕрлĕ салтак саламĕпе сывлăх сунатăп. Анне, есĕ сана пĕр савăнăçлă хыпар каласшăн: есĕ çыраннă сайом опликатси номĕрĕ 250 т. выҫаса илнĕ. Есĕ куна хам тивĕçлĕ куçсемпех тĕрĕслесе тухрăм. Есĕр вăл укçана илсе перекет кассине хурăр. Ахалĕн ку укçа сирĕн çĕтĕк хутаçсенҫе çухалма та пултарат. Тепĕр йенҫен, есĕр вăл укçана перекет кассине хурсассăн—патшалăха та пысăк усă пулат.

Анне, епĕ сире ÿкĕтлесе калатăп: укçана килте ан усрăр. Пытарса та ан хурăр, тула йе сарайне пытарсан—хамăр йалти шатра Макçăм хуштан кулакăн пек шĕвĕр сăмсаллă харсăр сысна тĕл пулсан, ахалех ҫамласа йама пултарат. Анне, тата. (Сасартăк çав самантрах ҫаршав йерипен хупăнат). (Ҫаршав.)

## ИККЕМĔШ КАРТТИН

Комсот пÿлĕмĕ. Сĕтел умĕнҫе Такка пĕҫҫенех çыр са ларат. Сĕтел çинҫе хутсем, шкутсем т. ыт. те пур.

## 1-мĕш курăнни

(Такка).

Такка (шăхăрса йурлат)
Иккĕ çтра, виççĕре—
План тÿлтаратпăр.
Виçĕ пин те виç çĕре—
Сайом çырăнатпăр!... (Вере кĕрет).

## 2-мĕш курăнни

(Таккапа Вере)

**Вере:** Ман килес...

**Такка:** Килех, Вере инке, килех. Ирт кунталла, малалла. Ох, епĕр тав тăватпăр, инке.

**Вере:** Ма?

**Такка:** Йалти хĕрарăмсенҫен пĕр есĕ çеç сайом çырăннă.

**Вере:** Ну...

**Такка:** Халĕ калех çĕнĕ сайом çыранма килтĕн пулĕ-ха тата? Е? (Калех малтанхи йуррине йурласа хутсене пуçтарса хурат).

**Вере:** Мĕн тата, хытă хыпаланатăн?

**Такка:** А а ăм... Мĕн...

**Вере:** Мĕн?

**Такка:** А-а, пайан районта кайас пулат... Сайом пирки канашлăва ҫĕнеççĕ.

**Вере** (хайусăрларакхăн). А, епĕ, мĕн... Манăн ĕне, вырăнпах выртат...

**Такка** (тĕлĕнсе). Ĕне?

**Вере:** Ĕне çав...

**Такка:** Мĕнле вара, ан тĕлĕнтерха, инке?

**Вере:** Мĕншĕн?

**Такка:** Ĕне ăçтан кравате вырттăр вара?..

**Вере:** Е е, йĕксĕк... Астумарăм епĕ... А, мĕн, Мишкă вырăнпах выртат.

**Такка:** Апла пулсан, ҫасрах пуҫнитсăна кайас пулас.

**Вере:** А, мĕн... (Ним калама аптраса). Мишкăна сĕт кирлĕ, ĕне сĕт памаст. Тем пулҫĕ ĕнене...

**Такка:** Е ей, есĕ, инке... Хаҫтерех выҫăх тухтăрĕ патне каймалла Ҫуп ҫасрах тухтăр патне!

**Вере** (силĕллĕ). Çук, есĕ, Такка нимĕн те пĕлместĕн.

**Такка:** Мĕн тата?

**Вере:** Нимĕнте пĕлместĕн, тетĕп. Тухтăрсем вĕсем тухатса çеç йараççĕ.

**Такка:** Вара?

**Вере:** Епĕ сайом опликатсине сутас тетĕп.

**Такка** (кăйуллăн). Çук, сутма йурамаст.

**Вере:** Мĕнле вара?

**Такка:** Çапла...

**Вере:** Астуха, Такка! Епĕ вĕт ҫукăн, тăлăх хĕрарăм. Манăн пĕр пус укça та ниçтан та тупмалла мар. Мана укça кирлĕ.

**Такка** (ÿкĕтлесе). Вере инке, итлеха есĕ. Ытлах сĕт кирлĕ пулсан пирĕн пата—колхоса çеç пыр. Колхосра сĕт нумай, парса йаратпăр. А, опликатсине сутсан—патшалăха пысăк сийен тăватăн...

**Вере:** Мĕнле сийен?

**Такка:** Сийен çав!

**Вере:** Манăн опликатси 50 тенкĕлĕх çеç вĕт?

**Такка:** 50 тенкĕлĕх çеç те... Есĕ—50 тенкĕ, епĕ 50 тенкĕ, тепри—50 тенкĕ. Апла епĕр 4 мĕлйарт укçана пĕҫĕкĕнех салатса йаратпăр вĕт.. Шутлаха, инке, пĕтĕм патшалăк планне пăсатпăр ун пек!..

**Вере** (çилленсе). Пирĕ çавăк нимĕн усси те çук унтан.

**Такка:** Ан ухмахланха есĕ?

**Вере:** Ма?

**Такка:** Кам пĕлет сана... Есĕ ун пек калани пĕрттех ҫухăн çын сăмахĕ мар. Кулаксен халапĕ çеç вăл, Есĕ пуçпа шухăшласан пулсан никçан та ун пек калас çук. 1040 МТС кам вăҫҫи тетĕн есĕ? Хамăра вăҫҫийех вĕсем. Вĕсем пурте хамăр колхоçнĕксен ĕçне çăмăллатаççĕ. Турксип тенине илтни есĕ?

**Вере:** Вара...

**Такка:** Турксип тенине пĕлетни?

**Вере:** Пĕлместĕп çав...

**Такка:** Пирĕн Совет союсĕнҫе Туркестан тенĕ вырăн пур. Унта хлоппăк ÿсет, тырă пулмаст. Вĕсен çĕçен хирĕвҫе тĕрлĕ хир кайăкĕсем çеç вĕçсе çÿренĕ. Халĕ çав çĕçен хирте хлоппăк çеç акса тăваççĕ. Кул-

ти ĕçлекенсем вађђи Çĕпĕртен тырă турттарса килеçĕ. Унти хлоппăкран çитсăсем тăваççĕ. Çакнашкал пысăк ĕçсенђе санăн пĕр пусу та паллă вырăн йышăнса тăрат.

**Вере**: (Иккĕленсе) Мĕнле вара?

**Ťакка**: Çаплах...

**Вере**: Мана сĕт кирлĕ. Ĕни те ђирлĕ, Мишкă та уçă мар. Манăн мĕн курмалла вара?..

**Мишкă**: (ђӳређерен кăшкăрат). Анне, ĕне сума!

**Вере**: Ей-й, мур ађи!..

**Ťакка**: Ав, вăн Мишкă вĕт ку!

**Вере**: Çавă, мур ађи!..

**Мишкă**: (сасă). Анне, ĕне сăвас пулат.

**Вере**: (ђӳређе патне пырса). Кай, йĕксĕк ађи!.

**Ťакка**: (айаккинелле). Кам та пулсан жĕтĕртнĕ ĕнтĕ кусене... Елек хыççăн кайаççĕ... (Верене) Çапла, Вере, инке... Ак, хађ ывăлу та сывалнă ĕнтĕ?..

**Вере**: (Ним калама аптраса). Сывалнă пулмалла,..

**Ťакка**: Ĕнӳ те сывалнă?

**Вере**: Сывалнă...

**Такка**: Сĕт те парат?

**Вере**: Парат...

**Такка**: Опликатси сутма та кирлĕ мар ĕнтĕ хађ. Пурте пур, пурте сывалнă.

**Вере**: Ах, итлеха есĕ, Ťакка пиахам!

**Ťакка**: Мĕн?

**Вере**: Ара манăн килĕ-çурђĕ те йатăнса анма пуçланă. Хăвах пĕлетĕн, кĕç акă пӳрт те лартмалла... Укçа кирлĕ!

**Ťакка**: Акă вăт, опликатсисемпе укçа выђаса илен те, унђух, пӳрт мар, темĕн те лартма пултаран...

**Вере**: У-у, уна шанса...

**Ťакка**: Есĕ хăвăн опликатси номĕрĕсене тĕрреслевика?

**Вере**: Мĕн тĕрĕслемелли пур вĕсене! Сунлăха хунă та, выртаççĕ.

**Ťакка**: А-ха, ђихма, кин...

**Вере**: У-у, кашни тăм пит выђаса иле пуçласан... Патшалăх нихçан та тăн тытас çук. Пирĕн пек тăм пăшалсем тĕвђере темĕн ђухлех пулĕ.

**Ťакка**: Кӳр-ха опликатсиле!

**Вере**: Ме, на! (Опликатсине Ťаккана парат)

**Ťакка** (таплитсă гăрăх тĕрĕслет). Хм-м... (айăккинелле) Хе, шеђмă... Выђасах илнĕ ђĕмере...

**Вере** (ĕвенмесĕр). Ан суйестер пустуйне!

**Ťакка**: Çукха, суймастăп. Ђимка есĕ, инке, епĕ тăхта кунта (тухат.)

## 4-мĕш курăнни.

(Вере пĕђђен.)

**Вере** (хăй тĕллĕн). Ех, ђĕмересемпе... Вĕсем шăлт хăйсен йуррипех йурлаççĕ. Апла та, капла... Туркçип, йĕксĕк... Туртса кăларнă таçган кирлĕ мара... тем те хĕпĕртетĕç хађхи саманара... (çав саманарах старик кĕрет).

## 4-мĕш курăнни:

(Верепе старик)

**Старик**: Сывăн, айван ђавка?

**Вере**: Сывах-ха..

**Старик**: Кунтан Ťакка теви тухса карĕйм тата?

**Вере**: Халех килет, нумай тăмаст.

**Старик** (хыпаланнă пек пулса). Ха, мăшкăл... Епĕ питĕ васкаттăм та..

**Вере**: Ну?

**Старик**: Епĕ лашапах килтĕм. Лашана урамах тăратрăмха. Манăн уатăн опликатсисем илмеллеђђĕ те...

**Вере** (хавасланса). Акă, манăн 50 тенкĕлĕх опликатси пур. Мана укçа кирлĕ!

**Старик** (шугласа тăран пекки пулат). Мĕнле санăн, ђипер опликатсийех-и вăл?

**Вере**: Ђипер опликатсийех, акă кур (кăтартат). Илхе, ил, пĕр 25 тенкĕлĕх те пулин илха муђи. Укçаран хытă аптраса çитрĕм епĕ. (Çуррине парат). Ме, акă! (Лешĕ илет.)

**Старик** (опликатсисене пăхса). Ку опликатси мана килĕшмест пек. Есĕ мана тепĕр опликатсине парха. Куна ме, усра. (Иккĕшĕ опликатсисене улăштараççĕ. Лешĕ укçа тӳлет.) Акă сана укçа!

**Вере**: Йурат, спаççипă сана, муђи!

**Старик**: Хуза спаççипă...

**Вере**: Ăстисем есĕ, муђи?

**Старик** (тăсса) Ката-а-ари...

**Вере**: Ăста кайатăн?

**Старик**: Хулана кайатăп. (Ђăлĕм ђĕртет те, тапак хутаçне сак çинех манса хăварат).

**Вере**: Ĕçпе кайатни хулана?

**Старик**: Еçĕ ĕç ђухлĕ те çук таха... Ну сывă пулха тат...

**Вере**: Сывă пул..

**Старик**: Сывă пул... (Тухат.)

## 5-мĕш курăнни:

(Вере каллех пĕђђенех)

**Вере** (тĕллĕнсе). Ак, ухмах... Çынсем пур опликатсисене сугасшăн çӳреççĕ, Вăл, тăм камит, опликатсисем илсе çӳрет... Тупăнат мăн ухмах! (Ťакка ђупса кĕрет.)

## 6-мĕш курăнни:

Верепе Ťакка.

**Ťакка** (хавасланса.) Ну, Вере-инке!.. Савăннипе кĕçнерни пуххинђи камит пекех ташламалла санăн..,

**Вере**: Çук, ĕнтĕ... Ĕсĕр манран темĕн ђул кулсан та кулсах пĕтереймĕрха.

**Ťакка** (хыпаланса). Пыратăп Кавĕрле патне, шăп уй патĕнђе çĕн таплитсă тăрат. Пăхатăп... (Хавасланса) сан опликатси № шăп та шăп **250 т.** выђаса илнĕ!

**Вере** (тĕлĕнсе). Кам... Епĕ... 250 т. ? Ђăнахи?

**Ťакка**: Ђăнах çав, ђăнак. Есĕ 250 т. выђаса илнĕ... Парха опликатсисене! (Лешĕ парат).

**Вере**: На!..

**Ťакка** (таплитсăпа тĕрĕслесе). Ыттисене те парха кунта?

**Вере**: На!.. (Парат.)

**Ťакка**: Ну, ытти №-сем выђаса илеймен инке... Пĕр № çеç выђаса илнĕ..*

**Вере** (хытă ӳкĕтленсе темле ăшăрхаса кайат). Ĕх, Ťакка, Ťакка-а...

**Ťакка**: Мĕн тата, инке?

**Вере**: Ман пуçа касса татса тăварламалла çеç.

**Ťакка**: Мĕншĕн?

**Вере** (йĕрес пек). Епĕ опликатсисене сутса йатăм вĕт!

**Ťакка**: Кама?

**Вере**: Кама пулмалла.. Хам та пĕлместĕп. Пĕр мăк сухаллă кукша старика сутрăм... Ех, ухмах, ухмах!.. тĕвђери паллă ухмах епĕ... Хам аппак 25 тенкĕшĕн 250 т. укçана сутрăм...

**Ťакка**: Ей-йай-йай... Апла пулсан пуçна та татса сутмалла санăн. Ма пуçна татса сутмаран тата?

**Вере**: Ех, умах пуç...

**Ťакка**: Сава вĕт укçа кирлĕ... Укçашăн пуçна та сутма хатĕр есĕ!., Айван çав, пит айван. (Аллине сулса тухса кайат).

### 7-мӗш курӑнни:

(Вере пӗҫҫенех).

**Вере** (Халӑх йенелле). Каларха халӑхсем? Мӗн пирки капла пысӑк асап тӳсрӗмши епӗ?

**Сасӑ:** Кулак хыҫҫӑн кайса?..

**Вере:** Макҫӑм пӗтерҫӗ ҫав, Макҫӑм пӗтерҫӗ... Макҫӑмах пӗтерҫӗ... Кулаксем ҫав ҫын пуҫне ҫӗрӗллех татса илеҫҫӗ... (Старик кӗрет).

### 8-мӗш курӑнни:

(Старикпе Вере).

**Старик:** Хам та ҫав, икӗ питлӗ пашку пек!.. Ҫӗлӗм хутаҫҫи манса йулнӑ манӑн...

**Вере:** Итлеха, муҫи, мана хамӑн опликатсисене кайалла пар!

**Старик:** Пай-пай-пай... Мӗншӗн капла тата?

**Вере:** Опликатсине сутма йурамаст, теҫҫӗ. Ӑна сутсан патшалӑха сийен пулат.

**Старик:** Тӗрӗс, тӗрӗс...

**Вере:** Ҫавӑнпа епӗ опликатсине кайалла илес тетӗп.

**Старик:** Ҫук, ӗнтӗ тинех айван ӑсӑм...

**Вере:** Ма?

**Старик:** Епӗ вӑл опликатсине хуланах ывӑл патнех хӑвартӑм.

**Вере:** Мӗнле апла?

**Старик:** Нимле те мар!

**Вере:** Сайом саншӑн та усӑллӑ...

**Старик:** Ҫапла, усӑллӑ... Ну, вара?..

**Вере:** Пӗлместни есӗ 1040 МТС не камшӑн тунине.

**Старик:** Ну?..

**Вере:** Мӗн «ну», пӗлетни есӗ трактӑр савӑҫӗсене камшӑн тунине? Вӗсем пурте пирӗн сайом укҫасемпе пулаҫҫӗ.

**Старик:** Ну, вара...

**Вере:** Туркҫип ҫинҫен илтни есӗ?

**Старик:** Туркҫип?

**Вере:** Туркҫип ҫав!

**Старик:** Илтнӗ...

**Вере:** Илтнӗ пулсан пар мана опликатсине?

**Старик:** Ну, вара?..

**Вере:** Ну, вара мар, пар халех. Халех пар.

**Старик:** Ҫук, епӗ вӗсене алран-ала куҫармастӑп.

**Вере:** Меншӗн?

**Старик:** Йурамаст.

**Вере:** Мӗншӗн...

**Старик:** Мӗншӗн, паҫӑрах йурамаст тенӗ вӗт сана.

**Вере:** А, епӗ выҫҫаса илнӗ пулсан...

**Старик:** Выҫҫаса илсен укҫи манӑн пулат... Есӗ ху сутрӑн вӗт мана опликатсисене?

**Вере** (ӳкӗтленсе). Ех, муҫи, муҫи! Тархасшӑн ӳкӗте кӗрҫҫӗ мана! Пар мана опликатсисене кайалла...

**Старик:** Епӗ вӗсене ҫукатнӑ пулсан...

**Вере** (ҫиллесе). Ех, тепӗр темесен тата... Ни каласа ӳкӗте кӗмест кӗве старикки...

**Старик:** (шӳтлӗн). Есӗ ху кӗве!

**Вере:** Ак, пӗре... куҫна-пуҫна кӑларса илем ҫулса тытсассӑн...

**Старик** (кутӑнлашат). Ҫук, епӗ санран нимле опликатси те ильен.

**Вере** (хӑпартланса). Илмени есӗ?

**Старик:** Илмев!

**Вере:** Ҫӑн илмен?

**Старик:** Ҫӑл илмен...

**Вере** (оурса). Ех, вӑт ватӑ ҫын тесе шан сана...

**Старик:** Мӗншӗн?

**Вере:** Мӗншӗн? Куҫлӑ-кӗрет тӳнан вӗт, куҫлӑ кӗрет суйатӑн... (таракса). Санание сухална ҫӑк тӗк татнӑ пек пӗрҫӗн-пӗрҫӗн ҫумламалла. (Вере старике тытма тӑрат. Старик йапӑр-йапӑр сисмесӗре пек сухалне хӑварт хуса перет. Вере старике тумтир сухавӗнҫен йарса тытат, лешӗ тумтиррине хуса парахат. Старик тумтирри Вере аллинех тӑрса йулат. Вере ҫӗре ӳкет. Вере умӗнҫе—Такка тӑрат).

**Такка:** Ой, есӗ мӗскер хӑтланатӑн, Вере инке?

**Вере** (ура тӑрне тӑрат). Ех, Такка, Такка!..

**Такка:** Мӗн? Мӗн пулҫе?

**Вере:** Нимӗн те пулман... Ма есӗ ҫавӑн пек хӑрататӑн мана?

**Такка:** Хӑратманҫке...

**Вере:** Пӗтӗм вӑй пӗтрӗ, ҫӑнах пуҫ тасе...

**Такка:** Ма?

**Вере:** Ара, вӗт, 250 тенкӗ ахалех шӑва путаҫҫӗ... Ахалех, никама усӑсӑр пӗтеҫҫӗ 250 тенкӗ укҫа!..

**Такка:** Ҫапла ҫав!

**Вере:** Такка, Такка!

**Такка:** Мӗн?

**Вере:** Ҫыр мана халлех ҫӗнӗ сайом илмешкӗн. Епӗ те сайом сармашкӑн малашне хама угарнӗсӑ тесе шутлатӑп.

**Такка:** Йурат, йурат.

**Вере:** Тинех ӑнлантӑм ӗнтӗ сайомсен уссине! Ҫыр мана та сайом илмешкӗн... Епӗ те патшалӑха хапрӑксавӗтсем, МТС-сем тума, пулӑшатӑп!

**Такка:** Н-га, сайом уссине пурте ӑнланҫӗҫ пулмалла?..

**Вере** (курса лараканесене). Есӗр те ӑнлантӑра сайом усӑллине?

**Сасӑ:** Ӑнланнӑ...

**Вере:** Епӗ каллех тепӗр 50 тенкӗлӗх ҫырӑнатӑп.

**Такка:** Йурат. «Пилӗк ҫуллӑхӑн 3-мӗш татӑклӑ ҫулӗ» ҫӗнӗ сайом икӗ тӗрлӗ; пӗр йышши—проҫҫӑнлӑ, тепри—проҫҫӑнсӑр...

**Вере:** Икӗ тӗрлӗ?

**Такка!** Икӗ. 20 тенкӗрен пуҫласа 50 тенкӗне ҫитеҫҫен выҫҫаса илме пулат.

**Вере:** Ҫыр мана та!

**Такка:** Хӑшин ҫине?

**Вере:** Проҫҫанли...

**Такка:** Выҫҫаса илмеллине мари?

**Вере:** Ҫыр иккӗшне те ҫурмалла! Ҫурмалла пултӑр...

**Такка:** Проҫҫӗнли кашни ҫулсерен 10% укҫа хушат.

**Вере:** Ну-у?..

**Такка:** Ҫанах! Есӗ 50 тенкӗлӗх ҫырӑнсан ҫулсерен 5-шер тенке укҫа хушӑнат.

**Вере** (лӑпланса). Ах, ҫырлахтӑр анҫах, паҫӑр ҫӗре ҫалӑш улмури пекех ишелсе анаҫҫӗ. Сана нимӗн те паламалла мар. Сухал ҫыпаҫтарнӑ та, ҫӑн-ҫӑн ват ҫын пекех тухнӑ...

**Такка:** Ҫапла, Вера инке!... Пӗре ҫырӑннӑ сайома сутма йурамаст. Сайома нумайраххӑн ҫырӑнма тӑрашмалла.

**Вере:** Тӗрӗс, тӗрӗс.

**Такка:** Тӗрӗс ҫав! Ме опликатсисене. (Парат). Ҫапла, сан пекки пӗрре ҫеҫ мар, темӗн ҫухлех вӗсем. (Курса лараканссем ҫине кӑтартат).

**Вере** (курса лараканесене). Йулташсем, итлӗрха, есӗр! Сайома есӗр те ан сутӑр. Ҫӗнӗ опликатсисене пурне те перекет кассине хурӑр.

**Сасӑ:** Тӗрӗс.

Ҫаршав.

Вырӑсларан Миххаил Ҫамаҫ майласа куҫарнӑ.

# ВАСКАРӖ

Пуху мӗнле пухӑвви ҫинҫен каламасан та йурӗ. Пухӑвнах вӑл. Хӗрӗнҫи Хӗлип ҫӳреҫе ҫанаххисенҫен кашниех:

— Ей, Митрахван, Трихван, пухха тухмалла!

— Йеккӗм, Макҫӑм, хӑвӑрт утӑр!—тесе йала тавра шаккаса ҫаврӑнсан хускаввӑ еппин халӑх.

Анҫах хурал пӳртӗнҫе Ваҫук, Маккар тата тепӗр ик-виҫ ҫын курӑккаласавах пухӑва усмалла пулнине каласах пулаҫ. Ытти халӑха кӗтмен вӗсем. Мӗншӗн тесен, есӗр ӑна хусамӑрах туйса илмелле. Ун пек йа пала, хуларан мӗнтен йала пывӑ пуҫлӑх пек мӗн пек портфӗллӗ, куҫлӑхлӑ етемсем васкаввиҫен, тепӗр ҫух тата, вӗсем халӗх вумай пухӑвса ҫитсен ытлашши каласса ҫӗлхисене йакатасран шикленниҫен те килет. Массӑран айакра тӑракан етемсем тейӗпӑр вӗсене. Пурте мар кочешвӑ, ӑва ан манӑр.

— Пухӑва уҫатпӑр, калаҫма пуҫлатпӑр. Сӑмах ҫавӑ хуларан килӗ йулташа паратпӑр. Хушамату мӗнлеҫӗха сирӗн?

Но латнӑ ҫак мӑн сумккӑллӑ йулташа паратпӑр!—тесе пӗлтерҫӗ претҫетатлӗ.

Хайхи пилӗк-улта ҫын, шулҫӑсӑр йуман туратти пек сайра сухалӗсене кӑштах маҫҫаналла тӑратрӗҫ.

Хусамӑрах шутласа пӑхӑр. Кун пек паха момент вӑл мӗнле пулма пултарнине калама та хаӑм ҫитес ҫук манӑн.

Хуларан килни мӑн сумккиҫен пӗр хут татӑкки кӑларса аллине тытсавах тӑватӑ ҫынни тӑватӑ кӗтессе иккӗшӗ икӗ теккел ҫине ларса хурал пӳртне шапах тултарҫӗҫ. Хурал пӳрҫӗ пӗҫӗккех пулман та хӑт. Ҫаварӗсене ҫана кӗрес пек карсах сӑмахсене ҫӑтма хатӗрленҫӗҫ. Хӑлхисене те йароплан ҫунаҫӗсем пек сарса йарсах итлеме тытӑнҫӗҫ. Итлемесӗр, хуларан килнӗ ҫын тем ырӑ хыпар каласа ӑнлантарасса, ҫурхи кунсемшӗн пек хавас пулнӑ вӗсем.

— Епӗ, краштансем, сире сакоттовкӑ тултарма килсе. Сирӗн ӑна тумаллах!—тесе пуҫларӗ вӑл мулкаҫӑ хӳри пек кӗске токлатне пуклак ҫӗлхипе пӑтраткаласа.

— Мӗнле сакоттовкӑ тата, халӗ пурне те парса тата вӗт?

— Ку тата вутӑ сакоттовки теви. Шкулсене, хапрӑк-савӑтсене те кирлӗ вӑл!

— Мӗн памалла шкула?

— Мӗнле сакоттовккӑ хапрӑк-савӑта?—ыйтаҫҫӗ умлӑ хыҫлӑ.

— Вутӑ сакоттовкки туса памалла!

— Аха, вотӑ памалла еппин?

— Миҫешер пулене памалла-ха кашни сӑмсаран?—ыйтрӗ Ваҫук.

— Ҫакапа вӗрене те йурати тен. Йуманӗ ытлашши ҫук хаҫ манӑн?

— Йуманӗ мар, ҫаки те ытлашши ҫук пирӗн!—Ҫӗмрӗк шӑвкра пек вӑрҫа пуҫларӗ пуху.

— Маха йалтан илеттӗр вуттине, епӗр луҫҫӑ хамӑр вӑрмана хайсах туса паратпӑр ӑна?

— Ҫӑнах та кайатпӑр!

— Кайаттӑр, тин кайни ара!

— Ӑҫта кайаттӑр? Пуху салатмалла и есӗр. Кайма йурамаҫ!—тӑл пӑхрӗ токлатҫӗк, катка тӗпӗ пек куҫлӑхӗ виттӗр.

— Киле мар. Вӑрмана вутӑ касма кайасшӑн епӗр;

— Ҫавна калатӑп та сире. Мӗнле ӑнланман халӑх есӗр.

— Епӗр килтен вутӑ памалла тесе, вутӑ сакоттовкки туса памалла теттӗр те. Вӑрмантан касса памалла теттӗр те епӗр.

— Ҫапла ҫав, токлат тенине ӳлӗмрен сӑмса шӑтӑкне пурвӳсене ҫиксех итлӗр ӗнтӗ. Есӗр вӗрениман пулмалла-ха.

— Минҫейӗн каймалла вӑрмана?

— Мӗн параҫҫӗ унта. Укҫа та параҫҫи тен. Пӗлтӗр панӑҫҫӗ!

— Краштанин мӑн куҫлӑх, манӑн пуртӑ катӑк та?..

— Претҫетатлӗ есӗ лав хатӗрле, епӗ пӗгертӗм. Васкатӑп!

— А краштанин йулташ, вӑрманӗ ӑҫта? Пӗлесҫӗ... Теленкки, квартӑлӗ?—ыйтаҫҫӗ пухурисем...

— Васкатӑп... Тупаттӑр унта! Ах паҫ_ох манса кайнӑ. Сире алӑ пустармалли пурҫӗ, йулташ претҫетатлӗ. Мехе ҫак хута.

— Мӗнле хутсем вӑсем?

— А-а, вӑл вӑрман касмалли токӑвӑр!

— Ӑҫтан алӑ пусатӑп епӗ ун ҫине. Вулас пулаҫ вӗт ӑна?

— Епӗ васкатӑп, ҫитмеллисем татах пур манӑн.

— Тем ҫырнӑҫке унта. Пӗлмесӗр мӗнле ара?

— Калаҫҫӗ сана рас. Вӑрман ӗҫлеме хирӗҫ еппин ес. Ҫыхвӑрсем пур унта. Пӑх куҫапа!

Претҫетатлӗ Моҫкӑ хӳри пек кукӑрткаласа та хуҫӗ токӑвӑр ҫине.

Таҫка сумккӑ ӑшне кӗрсе те выртрӗ токӑвӑр.

Пуху уҫӑлни шӑп пилӗк минутран тухса вӗҫтерҫӗ хула ҫынни хурал пӳртӗнҫен. Ури кӗлли кӑшт кӑна куранса йулҫӗ алӑкран.

Сӗтел ҫийӗнҫе: «Пртаккул опҫи сопрани.. вӑрмана каймалла... (Ах, тем каларӗ) Васкарӗ... Кӑранташӗ те ҫаяӑнтах выртса йулнӑ претҫетатлӗн. Тата тем ҫырасшӑн пулнӑ вӑл, анҫах увӑн хӑлхине урӑх нимӗн те ҫакланайман. Тен мӗн те пулсан ҫырнӑ пулӗҫҫӗ вӑл.

Кун пек ик-виҫ сӑмаклӑ пӑртаккул ҫӑвашла ҫырма пӗлменниҫен килнӗ темелле мар. Ун пек йапала васкавлӑ вӑхӑтра йаланах пулаҫ вӑл. Пӑшӑрханмалли нимӗн те ҫук унта.

Пӗри лав шырама васкавӑ, тапри хулана.

— Ӑҫта кунта, хуларан килнӗ терӗҫ?

— Карӗ!

— Ма тата?

— Васкарӗ!—Шакӑлтатрӗҫ пухӑва пухӑнса ҫитнӗ халӑх.

Аптрамасҫ темелле ку йапала. Анҫах халӑхӗ шалтах аптранӑ. Нимӗн те ӑнланайман вӗсем. Тӑлӑх ҫӗпӗсем пек шакӑлтатнӑ кӑна. Урӑх нимӗн те ҫук унта.

**Н. Майак.**

# Вăл суйнă

Кĕмĕл тĕслĕ пур пĕрţесем сывлăшра вĕçкелесе, çĕре çăмăллăн ӳкеççĕ. Çĕр тумхахлă, хурăç пек хытă шăнса ларнă. Иалĕçтăвком умне урапа кӳлнĕ лаша пырса ţăрăнţĕ.

— Лав килţĕ, кайас ĕнтĕ. Но, хаţ сывă пулăрха,—сывпуллашса тухрĕ йалĕçтăвкомĕнţен РЕЌ рен килнĕ прикатир.

Урапа çине лавăçпала йунашар майлашса ларţĕ. Лавăç лашине пĕр-икĕ пушăпала çатса илţĕ те, лаша урам тăрăх, район ţенттăрĕ йенелле васкаса утрĕ.

— Аван ĕçлет мĕн çирĕн йал колхосĕ,—сăмах хускатса йаţĕ прикатир.

— Еп хам та колхоçнĕк... аванах ĕçлейместпĕр çав хаţ...

— Йепле аван мар,—лавăç сăмахне татсах каларĕ прикатир.—Сирĕн пек ĕçлекеннисем районĕпеле те ларри пӳрнесем ţухлĕ кăна. Çăмăр айне ӳкмасăрах авăн та çапса пĕтернĕ есĕр, вите те тунă, çилос та хывса хăварнă, сайом сатăнийĕне те 160 проţăнт тултарнă. Тырра та ĕçлени тăрăх валеçнĕ. Пĕр сăмахпала каласан, пур йенţе те сирĕн 100%.

— Апла мар çав. Пурне те тунă тесе кам каларĕ сире?—ыйтрĕ лавăç.

— Хăвăр колхос претçетаттĕлĕ каларĕ. Отţот та çырса парса йаţĕ.

— Суйнă вăл сире. Хаţ пирĕн колхосăн уйра пĕр кектар çинţе хуратул çĕрсе выртаť. Авăн çурринче те çапаймарăмăр-ха. Авăн çапма тухманнисене правлени нимĕн те тумасť. Витине тума йăвăç кӳрсе хунă. Анţах тума тытăнман-ха. Хĕлле те алкум вĕçнех килсе тăţĕ. Правлени наţартарах ĕçлет çав пирĕн. Епир каланине килĕшмест.

Прикатир тĕлĕвнипеле нимех те калаймарĕ.

— Ав, куратри?—кăтартрĕ лавăç прикатире.—Çырма кĕрриңţе тĕтĕм мăкăрланаť--вăл çилос. Курăкне тураяаţţĕ, çăмăр çума пуçларĕ. Шăтăкне йараймарăмăр. Халĕ ахаţ çĕртех çĕрсе выртаť. Веç тата çырма тепĕр йенţе пĕренесем—вите тумаллисем.

Прикатир çитменлĕхсене хăй курсан тата ытларах тĕлĕнţĕ. Пĕрре лавăç çине, тепре тĕтĕм пек мăкăрлавакан çилос çине пăхса илет.

— Çапла çав.. кĕтуç наţар пулсан, сурăхсем те наţар ӳсеççĕ. Правлени лайăх йĕркелемесен, ĕçсем те йухăнаççĕ çав,—лавăç ;ар сухалне шăлкаласа колхос çитменлĕхĕсем çинţен каласа пыраť.

Лаша кĕпер çине кĕţĕ.

— А вăт, çак кĕпере те йусамалла, йăвăç та хатĕр. Правлени ţарса тăраť. Йăвăçа хаţ сайа йарас мар тет. Хаţ—хĕлле кĕперĕ йăтăнса ансан та çӳрĕпĕр, çуркунне тăватпăр ăна,—тесе ţарса тăраť. Мĕн тăвас тен правленине. Вăсем пирĕнтен аслă вĕт.

Лаша тăвайккинţен улăхсан ţăрăнţĕ. Те ывăннă пек пулţĕ.

— Йулташ, пăхха! Ак ана çинţех хуратул выртаť—тĕллесе кăтартрĕ лавăç хăйсен умĕнţи анана. Прикатир, тытсах пăхрĕ хуратула.

— Тя, çĕрнĕ. Кунпала нимĕн те тăвайрас çук. Вăл суйнă! Сайса кăтартма мана!—хыттăнах каларĕ прикатир.

Прикатира хулана лексен 3 кунтанах колхос претçетаттĕлне вырăнтан кăларţĕç.

# Тилĕ тус йе Кутревтсĕв

— Сторовă йулташ!?

— Сторовă.

— Есĕ и Колхоçнĕк çуртĕн саветуйушţи?

— Ихĕ пулатăп.

— Сирĕн кунта савхоса пĕр çын кирлĕ темеççĕ-и?

— Кирлĕ.

— Епĕ кĕрес тетĕп.

— Парттире тăратни?

— Тăратăп.

— Колхоçнĕкри?

— Колхоçнĕк.

— Пурвăç йенţен мĕнле сирĕн?

— Епĕ рапоţţи.

Çапла каласса ларсан хăй çын кунта вырнаçрĕ. Пайантан вăл колхоçнĕк çуртĕнţи савхос.

Виçĕ ерне ытла ĕçлет. Халĕ унăн майри те килţĕ. Çапла пурăнсан вăл пĕтĕмпех пуç пулţĕ. Вăл кунта пурăннине пĕлекенсем тӳрех кун патне хăнана кĕреççĕ. Пурăнсан пурăнсан кун хӳнешшĕ—вăрăм çилхеллĕ пуп та хăнана килнĕ май ţылай пурăнţĕ.

— Ну, мĕнле пурнăçсем?

— Питĕ аван кунта епĕр йăва çавăртăмăр, хуţăм.

— Турă сире сывлăх патăр.

Çапла халапа пуçларĕç лешсем.

— Çĕнĕ савхоса халĕ пурте вĕренсе çитрĕç .Ăна укçа-тенкă те пĕтĕмпех шанса панă. Ун алинţе пулнă пур токкумĕнтсем те:

— Кутревтсĕв.

— Кутревтсĕв.

— Кутревтсĕв, тесе кăна ăна ţĕнсе йăпатса пурăннă.

Ţылай пурăзнă май майрине те ţаплактарţĕ, Унтан майрин йăмăкне ţĕнсе килсе утраççĕ. Кутревтсĕвсем виççĕн пурăнаççĕ. Виççĕн пуррăнаççĕ пулсан та ţаплă тăхăнса çӳреççĕ, апатне те питĕ таса çиеççĕ. Вăл çапла пурăннинţен пурте тĕлĕнеççĕ.

— Мĕнле вăл 90 тенкĕпех питĕ лайăх пурăнаť. Виççĕн вĕт çапла пурăнаççĕ.

— Килтен кӳреççĕ пулĕ?

— Çук.

Мĕнле апла майлашаççĕ?

— Вăт. Вĕсем çут тĕнţере пурăнма май пĕлеççĕ. Епĕр вĕренменка.

Çапла, çитрĕ кĕркунне. Хура çĕр витĕнţĕ шурă йурпа. Ку тарантţен те çаплах вăл ĕçленĕ. Ара, ĕçлет çав. Хавлă çын, „партти ţленĕ“ вĕтха вăл.

Çапла пурăнсан, пурăнсан кĕркунне ЁХИ-нţен пĕри килсе комиççипе Шупашкарти колхоçнĕк çуртне тĕплĕн ревиçи турĕ. Ревиçире акă мĕн курăнţĕ:—çапла пурăнса Кутревтсĕв мĕн пурĕ 659 т. те 60 пус хăй калифине ţикнĕ. Халĕ Кутревтсĕва кăларнă.

[redacted] Кутревтсĕв партти ţлен пулман та мĕн. Кусемшĕн Кутретсĕва решуткă тĕвĕпе парнелемелле.

**Вaçухха Саңкки.**

* * *

Вулакан йулташсем, есĕр кун пек суйа отţот паракансем пулман тейĕр. Пулках вĕсем. „Малалла“ колхос претçетаттĕлне те (Çĕрпӳ рай. Ţирĕ-касси йалĕнţе) суйа отţотсем панăшăн колхос претçетаттĕлĕнţен те, парттирен те сирпĕтрĕç. **Васкай.**

# Пуçĕсене хыçрĕç

Урпа пуçĕ тăкăннă ђухнехи пек хусканђĕ пайан йал вăрмана кайма. Прикатир Аврам та кăвак шуçăмлах йала тавра пĕрикĕ хутђен те ђупса çаврăнса çитрĕ килне. Хăвăртларĕ вăл халăха вăрмана.

— Какшĕ, каймалах вăрмана. Ĕçлемеллех!

— Петтилеткă вĕт!

— Пилĕке тăваттăра... Вăхăт мар кахалланпа!

— Плансене срукђен тултарса иртермелле рас!

---

# Хĕрес хӳттинђе ђухне



— Ĕлĕк çав çуртăн тăрринђе хĕрес пурђĕ те...
— Хĕрес пур ђухне унта епĕр тырă пытараттăмăрђĕ те...

— Н/ айта, хăвăртрах çетер вăрмана!—шакăлтатса тухса карĕç уйалла. Ђуптарђĕç вăрманалла.

* * *

Кĕрлет, çĕмĕрлет хура вăрман. Кĕрĕслетсех ӳкет вата йуман. Çав тери ĕçе хыгă хĕртет ку ерттел тейăн есĕ айакран пăхсан. Патне çитсен пĕр йăвăç кутĕнђе 20-30 çын тĕпĕртетнине курсан, шăлтах тĕлĕнсе кайăн. Кама мĕн аса килнĕ çавна ĕçлеççĕ.

Хађ кăна Миттрахван вугă тагађђĕ, пăђăк туртма та куçрĕ.

Еркип йуман касађђĕ, çатра туртма уттарђĕ.

— Ес кунта мар, хăвăн ерттелне кай.

— Ăçта манăн ерттел—эпĕ пĕлместĕп. Кам ăна...

— Ĕвер мĕн ĕçлерĕн есĕ ара?

— Хăма вартарăм.

— Пайан та варта хăма. Ăçта ђупса çӳретĕн. Аптраниç ĕççĕр.

— Çук, пайан манăн вырăна урăххисем тăнă.

— Ах есрелĕ. Ăçта вăл ĕç йĕркийĕ!

— Ей, Максăм, есĕ пайан кунĕпех вут кутĕнђе лармалла-и? Пиçсе кайăн хĕртĕнсе. Тыт—ĕçе, кăнтăр çитет есĕ çаплипех вут кутĕнђе.

— Ей, Терентти, есĕ те тăр. Пайан кĕвенти!—кăшкăраççĕ пĕрпĕрне.

— Пуртă ăçта хутăр манне?

— Пăђăкă çитмест. Ма теçетнĕк памасть. Параттăр терĕç вĕт!—çуйăкаççĕ хушăран,

— Хăш йуманне касмалла. Ыйтмаллађĕ!

— Муккул, есĕ хăма ан варта. Пăсатăн. Санран пулати ара вăл. Ђăхă йурман килте хăй, хăма вартасшăн тата. Ех, ађа-пăђа.

— Мĕн тумалла ман тата?

— Ăçтан тытăнмалла ĕçлеме?—йăслаççĕ ĕçлекенсем.

Çапла аврашрĕç вĕсем. Ир пуçласа касђен. Пĕр-ик купиă меттăр кăна вутă хатĕрлерĕç шереметсем. Паллах ĕç йĕркеллĕн ăнман. Тухăçлăхĕ те пулман. Ђылайђђен çапла аппаланђĕç вĕсем. Ĕçе йĕркелеме теçетнексем те пулнă тӳнтер. Хăйсем те мĕн иккенне пĕлмен.

* * *

Вăхăт шурĕ пит хăвăрт. Уйăх иртсен ĕçлекенсем, укçа, промтавар тытăнђĕç валеçме. Анђах лекет кăсене пит хĕсĕк.

— Ма сахал параттăр, советăн пур вĕт хађ?—вăрçаççĕ вĕсем.

— Пур, анђах ĕçленĕ тăрăх паратпăр вĕт!

— Мĕн ђухлĕ ĕçленĕ еçĕр?

— Питĕ сахал ӳкнĕ куиие сирĕн!

— Улталаттăр. Манăн пĕр куннеултă тенкĕ ӳкет терĕ теçетнĕк?

— Апла пулĕ те, унтах тепри кахалланнă. Ун çине те есĕ ĕçлени саланнă.

— Ма параттăр ăна есĕр?

— Иĕркеллĕ ĕçлемен есĕр. Прикатă пулман сирĕн. Пурте пĕрле ĕçленĕ есĕр. Çавнашкалах промтавар та укçа тăрăхах валеçĕнет.

Акă Наснарсен прикати кунне 5-6 тенкĕ ĕçлесе ӳкернĕ. Промтавар та ђыллайах илђĕç. Пиншак, шалавар, мĕн кирлĕ çавна тăхăнђĕç. Хăшĕ пĕри преми те илђĕç. Вĕсем сирĕн пек аврашман, кашнине хăйне тĕрлĕ ĕç панă. Прикатăпа ĕçленĕ, шута та тĕрĕс илсе пынă.

— Ах, прикатă мĕнте.. Найансене йантлаттармаллађĕ!—лак карђĕç çăварĕсене, хыççрĕç пуçĕсене.

— Ей, суйат, суйат вăл. Хвантаçи кăна!—тейăр есĕр.

— Ну та, как рас калаттăр та. Иетĕрне вăрманпромхосĕн Хуђаш тађђинђе кун пеккисем пĕлтĕр пулнине тувас теттĕри-ха?

Ере-е-е, астăвăр. Кăçал тата ан тăвăр. **Н. Пушкĕн**

# Ҫунлӑ ПЛАККАТСЕМ

**Шетмӗри (Йӗпреҫ р.) „Хӗрлӗ Кустар“ колхосри „пуҫлӑхсен“ ирсӗр тӗслӗхсем.**

Сӗтел ҫинҙе пӗҙӗк лампӑ куҫне хӗскелесе ҫунса ларат̆. Пӳртре Луккин харӑлтатса, машлатса ларнӑ сас анҙах. Урӑх нимӗнле сас ҙӗвӗ те ҫук. Пыллӑ ерех ӗҫнипе Луккинӗн пуҫӗ кикен ҙӑмланӑ сурӑкӑнни пекех антрашса кайнӑ. Пуҫ урмӑшат̆. Куҫӗсем алҙӑранипе кашкӑрӑнни пек сапаланҙӑк пӑхаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та Луккинӗн антранӑ пуҫне майӗ те ҙӑтаймарӗ. Темиҫе пӑтлӑ муклашка пекех пылҙӑклӑ пуҫӗ сӗтел хушшинҙи сак ҫинҙи плаккатсем ҫине тӗшӗрӗлсе анҙӗ.

———

...Акӑ, вӑл Нурӑсран Шетмелле анат̆. Лавӗ ҫинҙе сакӑр пӑт пыл. Пҙелникре пыл тийелӗ ҙух ӑна Ҫемен Павӑлҙ хайар кӑрҙама ӗҫтернӗ. Тамаша ӳсӗрӗлнӗ. Савӑнса пырат̆ Луккин.,.

— Ҫемен Павлӑҙ,—ӑслӑ ҫын, пӗлет кама йурамаллине, ан тив ӗнтӗ пурӑнтӑр... хург пӑхма ӑста... хӑй кулак пулсан та... хӑйӗн хуртне хӑй халӗ колхосӑн пулсан та тивес ҫук вӑл... Епӗ кам... хамши, хам марши?—терӗ те ӑшӑнҙе, лашине полнӑй хот йаҙӗ.

Лаша ӗрӗхсе кайнипе, 8 пӑт пыллӑ ҙӗрес туххамах лав ҫинҙен сирпӗнҙӗ.. пӑртак кайсан хӑй те ыраш ӑшнелле вӑшлатса тӑкӑнса йулҙӗ... шартах сиксе ӳкрӗ Луккин. Лаша икӗ туртапа йал хушшине кӗрсе кайнине анҙах курса йулҙӗ вӑл... Пыл ҫухалнӑ.

Малашне тевех иртӗнме памӑпӑр—терӗ халӑх.

Йӑвӑррӑн аран пашлатса сывла пуҫларӗ Луккин. Канӑҫлӑх ҫук ӑна. Хӑйӗн пуҫӗ айӗнҙех плаккатсем йашӑлтата пуҫларӗҫ. Ӗненмест Луккин—вивушлӗ плаккатсене те ҙун кӗҙӗши? Ҫук, вилнӗ пуђ епӗ, тесе шухӑшлат̆. Плаккатсем ҙӗлхе кӑларҙӗҫ..,

— Луккин, ӑҫта сирӗн ҫтелшҙӗнӑ!?

— Уравнилӑвккӑ—колхос тӑшманӗ!?

Кам тупӑша пӑт тӑрӑх салатассишӗн—вӑл колхоса хирӗҫ!..

— Луккин, пӗантсӑ, есӗ—колхос тӑшманӗ!.. унҙен те пулмарӗ пӗр плаккат пуҫ айӗнҙен сиксе тухрӗ те хайаррӑнкӑшкӑрса йаҙӗ. Хӑй хӑсӑкпа варланса пӗтнӗ...

— Луккин, мӗншӗн есӗ тырӑ вырнӑ ҙух пыла ҫемйери ҙун тӑрӑх пӗрер курка валеҫрӗн. Намӑссӑр, есӗ! Хӑвӑн ҫемйу пысӑк—2 ӗҫленӗ, теприн сахал—4 ӗҫленӗ.. ес ҫавах тепринҙен нумай сӑтӑрса илнӗ... теприне активмелӗх те ҫитмен, есӗ ытлашши пылран кӗрҙеме туса ӗҫрӗн!..

Хайаррӑн вӑрҫаҫҫӗ плаккатсем...

— Мӗншӗн колхос утарӗнҙе кулака усратӑр, кулакра шанҙӑк ҫук..

—Ӗҫ кунӗсене шута илмен!..

Ответ тыттармалла!..

Йулашкинҙен плаккатсем Луккинне йӑлтах хупӑрласа пӗркесе илҙӗҫ. Луккин—ним тума та аптрарӗ... сывлӑш та тухмасс̆.. плаккатсем хӑйсене ним вырӑнне те хуманшӑл тата хытӑ ҫиленнӗ.

Анҙах Луккин ҙӑтаймарӗ. Йӑвӑр тӗлӗкпе ҙунне тӑвӑррӑн туйӑнкипе, тарласа ҙӑм шыва ӳкнӗ. Мӗн вӑйӗ ҫитнӗ таран кӑшкӑрса йаҙӗ те вӑранса кайрӗ... тӗлӗннипе нимӗнле мар пулҙӗ ӑна. Йалӗҫтӑвком претҫетатӗлӗ унӑн умӗнҙе тӑрат̆.

— Ме сана сута каймалли повесткӑ—терӗ те вӑл, Луккинран кӗрекен хӑсӑк шӑршине ҙӑтаймасӑр пӳртрен тухса утрӗ...

Луккин йӑлтах тӗлӗнсе кайрӗ. Плаккатсем ҫине пӑхат̆—хӑсӑкпа варланса кupалансах выртаҫҫӗ. Анҙах плаккатсем ҙӗлхе кӑларнинҙен ытла, хӑй ӗлӗк тунӑ ӗҫӗсене тепӗр хут курса аташса, асапланса выртнинҙен тӗлӗнсе халтан кайрӗ.

Повесткӑна вуласа тухнӑ хыҫҫӑн ҫӳҫ-пуҫӗ вирелле ҙӑшӑлах тӑрса кайнӑн туйӑнҙӗ ӑна.

Ех, тӗрме, тӗрме..

Тивет пуђ ҫав ҫӗрме... тесе, хурланнипе мухмӑр ҙӗртме тухса кайрӗ..

* * *

Нумайах пулмасс̆ Луккинсене сут пулҙӗ. Сут, Луккинсем ҙӑнах та колхоса ҫӗмӗресшӗн анҙах хӑтланнине уҫҫӑн палӑртса, правлени претҫетателӗ Ҫиђук Ваҫҫипе иккӗшне те 7-шер уйӑх ирӗксӗр ӗҫлеттермелле тунӑ. Правленинҙен тасатнӑ. Колхос куллен аталанат̆.

**Йакку Араслан.**

# Шывпа хушӑнат̆

Ҫӗмӗрле кӑмпинаҙӗн столовайӗнҙе ҙас-ҙасах йашки ытларах тивтӗр тесе, вӗретнӗ шыв хуша-хуша параҫҫӗ. („Ӗҫри хӑвӑртлӑхсемшӗн“ хаҫатӑн 2-ш №)




— Йашки ытларах тивтӗр тесе...

# Командировкăра çӳренĕ ҫухне КУРНИСЕМ

## Районри хаçатсем тăрăх

Епĕ командировкăра ҫылай çӳрерĕм. Октябрĕр уйăхне Шупашкарта ирттернĕ ҫхыçĕвҫенех мана районсемпе паллашса вĕсене ĕçре пулăшмашкăн виçĕ ерне лĕке командировать туса кăларса йаҫĕç. Мана виçĕ ернелĕхе анҫах тесе çул çине кăларса йанă пулсассăн, епĕ вара районсенҫе ĕçсем ҫылай пулнипеле виçĕ ерне мар, шăп вăтăр кун та утмăл минут тата аллă тăхăр çеккунт пурăнтăм. Çапла вара çак вăхăтсенҫе епĕ ҫылай интерессем тата тĕрлĕ хыпарсем илтсе, пĕлсе çӳрерĕм. Халĕ епĕ çак кĕске отҫотра хам курса çӳренĕ вăхăтра пулнă ĕçсем çинҫен, ман куç умне курăннă картинккăсем çинҫен сире каласа парасшăн. Пурте лайăх итлĕр. Хăлхусене ҫанк тăратăр. Кам ман карттинккăна лекет, халех ăна йĕплĕ çăмах шăрпăкĕ вĕçне тăрăнтарса халăх курăнакан çĕрĕ (вырăна) лартăр.

Конешнă, Шупашкартан тухсанах епĕ çул çинҫе автопуспала çиле çурса пырса ишсе пыратăп.

Кĕрхи сивĕ çил хайаррăн вĕрнипеле автопуспа пыраканнисен сăмахсем пурнатте хĕрлĕ пăрăç пек хĕрелсе ларнă. Акĕ Çĕрпӳ хули. Çитрĕмĕр.. Епĕ автопус çинҫен антăм та тӳррех Р.Ĕ.К. çуртнелле утрăм. Унта калаçсан мана Р.Ĕ.К. района кăларса йаҫĕ колхоссемпе паллашмашкăн:

Çĕрпӳрен кăнтăрлара тухса, каç пулнă çĕре Хыркас йалне çитрĕм. Пурин кантăкĕсем те лампă çутипе ман çине тинкерсе пăхаççĕ. Хыркас йалсовет кĕнҫелерĕ тĕлне çитрĕмĕр. Сиве шăннипе лав çинҫен антăм та тӳррех кĕнҫелере ҫупрăм. Кĕнҫелерте халăх кĕрлет. Вĕсем тавлашни мана айакранах илтĕнҫĕ. Епĕ пĕр-пĕо пуху пулĕ тесе васкаса пӳрте кĕме тытăнтăм. Кĕнҫелер алăкне вăйпа тĕртсен те уçалмасť. Апла пуху пулмарĕ иккен. Çук. Пуху мар. Алăка питĕрсех лартнă. Кĕнҫелере никама та кĕртмеççĕ. Шалта тавлашаççĕ, вăрçаççĕ тата тискер сасăпа кăшкăраççĕ.

— Уçăрха?!

— Кам ĕсе?

— Районтан килнĕ çын.

— Саççетани пирĕн. Никама та кĕртместпăр.

Ҫăнахах та вĕсен «саççетани» пулнă. Йалсовет çекретарĕ Антрейĕв С. кĕнҫелерте картла выҫămалли крушок орканисатсиленĕ мĕн Пайан вĕсен кĕнҫелерте 25-мĕш саҫатти пыраť. Çавăнпа вĕсем каçхине алăка хупса, кантăксене хаçатсемпе хупласа лараççĕ. Картла выҫамалли крулок пуçлăкĕ Антрейĕв С. Çак саҫаттинҫе Антрейĕв тырпул хатĕрлевне ирттерет. Çак саҫаттинҫех Антрейĕв С. халăх сретствине пухас ĕçе пур вăçлаť. Питĕ матур çăв есĕ, Антрейĕв!

Хыркасран тухса çĕрлех 2-мĕш Çĕнйала ҫуптартăм. 2-мĕш Çĕнйал. Лампă çутисем пăҫ-паҫ çеç курăнаççĕ.

Пурте ăшă ыйăхра. Аслă урам варринҫи урам кĕтессинҫе ларакан пӳрте пĕри харлатгарса çывăраť. Вăл çавăн пек ҫкăнтăрлара та çывăракан ҫегем пулна мĕн. Унăн йаҫĕ аслăскĕр вĕт, Осоавиахим çекретарĕ. Халĕ те унăн ĕçĕ çаплах харлаттарса çывăраť. Халех ăна сивĕ шыв сапса вăратмалла. Атту ҫас вăранмĕ вăл. Вăратăр!

Вăл йал виттĕр тухса 1 мĕш Вăрманкас йалне пырса кĕтĕм. Кĕнҫелерте пĕри те çук.

Урамра никам та утса çӳрени курăнмасť. Автансем çеç унта-кунта аватни илтĕнет. Тыра вырма кайнă вăхăт пек 1-мĕш Вăрманкас йалĕ шăп. Аран пĕр ват çынна тĕл пулса ыйтрăм. Урам варринҫе мар, ăна епĕ пĕр пĕҫик урампа иртсе пынă ҫух курса ҫартăм.

— Кĕнҫелерте ĕçлевенсем ăста кайса пĕтнĕ. Пайан канмалли кун мар пулĕ?

— Вăрман касма кайнă.

— Есĕ ăна мĕнле пĕлетĕн?

— Ара ман ывăл кĕнҫелерте ĕçлет.

Епĕ тĕлĕнсех карăм. Пурте вăрман касма кайнă вĕт. Каçхине. Урам тулли халăх, пасарти пек утса çӳреççĕ.

— Кăнтăрла ăста ĕçлетĕр вара есир?

— Килте.

— Пурте килте-и?

— Килте.

— Мĕншĕн кăнтăрлара пĕрне те курăймарăм?

— А-а-а вĕт урамра çӳресен,—ахаҫ пурнатăр, тесе вăрман касма йараççĕ.

Ҫăнахах та вара, ку таранҫҫен те 1-мĕш Вăрманкас йалĕсем пĕри те вăрмана ĕçлеме тухман. Кашкăр тытасран хăраса вăрмана тухмаççĕ.

Икĕ кукҫан епĕ тӳррех Канаш районне вĕçтертĕм. Малтан Сухай касси йалне ҫарăнтăм. Кунта йалсовет преçетаттĕлĕ питĕ ҫĕреренех «тăрăшса» ĕçлет.

Ку таранҫҫен те Сухай касси йалĕнҫе кулаксене тырă çителĕклех хуман. Вĕсем кулаксене питĕ аҫашлаççĕ. Çавăнпа вĕсен йалĕнҫи кулаксем питĕ тăртанса кайнă. Комсомолĕссем кулак çывăрма выртсассăн, унăн урине те салтса майлаштарса выртараççĕ,

Ирхине те комсомолĕсемех кулака йаккатса тумлантараççĕ. Тата кĕнҫелерте ĕçлекеннисемпе иккĕшĕ кашни каçах ҫеркке ăшне кĕрсе пытанмалла выляççĕ. Халĕте çаплах...

Сухай кассинҫен манăн тӳррех Ухман йалĕ виттĕр Çӳлти Вăрман йалне ҫуптармалла пулҫĕ. Вулаканесем, есир ан шутлăр,—ку капла маршрутсăрах çӳрет, тесе. Çук. Апла мар. Маршрутпала çӳретĕп. Ну ,епĕ Çӳлти Вăрман йалне çитрĕм Вăхăт шăп кăнтăрла. Вулик сехет. Колхос правлени кĕнҫелерĕ умĕнҫе ратио.

— Алло... Алло!.. Алло!!! Мускав калаť, тесе каланă пуçларĕ. Йалти халăхсем пурте тĕлĕнсе итлесе тăраççĕ.

— 6 услови... колхосра...

— Колхоссене орканисатсипе хуçалăх йенҫен тĕреклетессишĕн!—Ратио сасси урамра йанраť. Патнерех çитрĕм те ратио çуккă та. Епĕ тĕлĕнсех карăм. Ман хăлхана ахаҫ çапла илтĕннĕ пулнă. Вăл пĕлтĕрех ратио ваҫҫи пухнă самооплошени укçи çавăн пек калаçнă.

Çӳлти Вăрман йалĕнҫен кутăн Канашалла ҫупрăм. Манăн маршрут пĕтрĕ. Халапĕ те пĕтрĕ. Кама мĕн панă, кама мĕн парнелеҫĕ çак отҫотра, вĕсене лайăх ҫамлăр.

— Кррр!.. Нăрт-нарт!..

Автопус Канаша çитрĕ.

Епĕ те Шупашкара вĕçтеретĕп.

Сывă пулăр Канашсем ĕпе тепре килеҫҫен, тесе Канаш хулинҫен тухса Шăхасан витĕр вĕçрĕмĕр автопуспа.

**Ваçухха Саҫкки.**

# ТРАХХОМПА ПАХХОМ

Мăнтăр, сар сухаллă,
Уксак, пĕр уралă,
Ни пысăк, ни пĕҫĕк,
Тумтирĕ пит ҫĕтĕк
Пахҳом патне—пÿрте,
Пĕр ирпе.
Врахăн уҫса алăка
Сулахай алăпа
Кĕрсе тăҫĕ пĕр ҫын.

— Кирек кам пулăр?
Хăна пулăр.
Килĕр.
Кунтарах иртĕр!—
Сак кăтартрĕ кил хуҫи—
Пахҳом кукаҫи.

—Христарати,
Парати?
Пуҫтарма тухрăм.
Кунҫул ҫеҫ пухрăм.
Памаҫҫĕ.
Кулаҫҫĕ,—
Хутаҫҫиве ҫĕклесе
Кăтартрĕ силлесе.

— Колхоса кĕмелле.
Мĕн... ҫÿремелле.
Кирек мĕнле пулсан та
Тупса парĕҫ ĕҫ унта.

— Илмеҫҫĕ.
„Кирлĕ мар" теҫҫĕ,—
Вăрахăн ларҫĕ сак ҫиве
Мăҫ мăҫ хупса куҫсене.

— Ҫапла пуҫ ҫав, ҫапла пуҫ,
„Ĕҫлейместĕн" теҫҫĕ пуҫ,—
Хĕрхенҫĕ Пахҳом.
— Ҫук та ырă ҫын,—
Кăшăрт сикрĕ маларах килнĕ ҫын.

— Ху кĕрешĕн мари тен?—
Иккĕленҫĕ Пахҳом тен.
— Мар та,—
Анасларĕ ҫăвар карса.

— Кулак?!
— Нет, не так!
— Тата кам?
— Траххом!
— Трахххооммм!?—
Тĕлĕнҫĕ Пахҳом.

— Та, траххом!
Ниăҫта вырăн ҫук
Ку ҫух.
Хваттер йамаства?—
Тархасларĕ траххом.

— Хваттера?!
Вăн кай, лере:
Ҫăва патне—Ҫăпĕре.
Ҫук сан валҫи хваттер.
Арăм, тыт ухват, хутер
Аййа!—
Пухрĕ пĕр вăйа:
Иарса илҫĕ ĕнсеран,
Пеҫĕ пÿклерен
Пит ҫÿлтен:
— Вил.
Тек ан кил!—
Тапрĕ урипе
Мĕн пур вăйĕпе.

„Лăкăррр"—
Лăкăртатрĕ Траххом.

— Тытăпăрр!—
Савăнҫĕ Пахҳом.
— Епĕ кăва мар,
Масса кĕрешет саппала,
Тасал, тар!—
Шалт хупрĕ алăка
Икĕ алăпа.
— Тасат вăл ларнă вырăна,
Шăлкала уруна.
Тасарах пул.
Иапăх ан пул!—
Систерҫĕ арăмне
Кăтартса урине.

Упалинҫĕ Траххом ҫырма хĕррипе,
Иерипе.

— Тепре кăна тапмалла
Шывалла!—
Кантăк витĕр йунарĕ Пахҳом

Ҫ. ШАПҪАК.

## Тĕлĕнмелле машшин.

— Мĕн ҫул халăх вĕренсе пыраť, пĕлĕтре те вĕҫме пуҫларĕ. Ҫын вилсен шăтăксене те машшинпах ҫавма пуҫлĕҫ.

— Ну!

— Та, хăвăрт пулса пыраť. Кулаксемшĕн шăтăк ҫавакан машшина шухăшласа тупнă.

— Ну? Мĕнлеши вăл машшин?

— Трактăр теҫҫĕ ăна.

# Шанђӑксӑр ђӗре

Теттӳн амӑшӗ йуратмаст̆ Совет влаçне. Мӗн тӑвассу пур, шанмаст̆ те ӗç те пӗтнӗ.

— „Ђӑн аслине хӑйнех куçне каларӑм,—тытӑнат̆ вӑл йут кас арӑмӗсем умӗнђе мухтанма (хӑйсен кассисем ӗненсех каймаççӗ),—есӗр, терӗм, суйапа кӑна пурӑнатӑр, терӗм. Вунтӑватӑ çул ӗнтӗ, терӗм, ултаттӑр, терӗм".

...Вӑрçӑ тухӗ тесе, Совета шанмасӑр, Теттӳн арӑмӗ тыррине патшалӑха памарӗ: çӗр айӗнђе шанђӑклӑрах выртӗ терӗ пулас. Анђах, те хӑй шанманнипе, хӑйне те шанмарӗç: ашкӑрса ӳсе ларакан сухан йӑранне шанмасӑрах ђавса пӑхрӗç; шанђӑклӑ çӗре пытарнӑ аллӑ пӑт тулӑ тупрӗç.

Теттӳн арӑмӗн шанђӑк çухатнӑ куçӗсем мӗнле ӗç пулсан та, ултавлӑ йенне кураççӗ. Колхос ӗçӗн «ултавне» вӑл тахçанах сиснӗ; колхоса кӗрекенсене ултут çӗрӗ çине илсе каймаллине те „пӗлнӗ".

— „Аван йапала пулсан пире кӳртме мар, систермесӗр хӑвараççӗç,—тет вӑл ђӑнпа суйана палаймансене. Хӑш ђухне шанђӑксӑр куçне колхос ӗçӗсем çине те çавӑрттарса пӑхат̆; унта шанђӑклӑ, ӳсӗмлӗ, витӗмлӗ ӗç пуррине курса пӑшӑрханат̆.

— Мӗн ырлӑхӗ пулмалла ӗнтӗ унта. Ӗçлекенӗ ӗçлет, ӗçлеменни пӗр май каркаланса çӳрет. Мӗн пур кахалсем ӗçлекенсен хушшинђе ырӑ курса пурӑнмалла иккен. Ним те тухас çук...

Çапла çавар уçма та памаст̆ çынна. Мӗн тӑватӑн вӗт... Шанђӑк çухатнӑ.

Шанмин-шанмӗ, уншӑн тӗнђери революци хурлансах каймаст̆.

Акӑ ун шанђӑксӑр куçӗсем умӗнђе, шанђӑксӑр урапа пек лађӑртатса—иргрӗç „шанђӑксӑр" кунсем, колхоссем,—колхос шанђӑксӑр кахал çынсене ӗçлемесен ним те памаст̆,—тейекен калаçусем çаклатса ђӑмларӗç.

Анђах ку та «шанђӑксӑр» ђӗрене шанђӑк кӳртмерӗ. Çӑвартан тухакан сӑмахсем çеç кӑшт кутӑнтарах туха пуçларӗç.

— Ара ес вӗсене шанса... Апла ӗçленӗ тӑрӑх кӑна парсан, кам кӗтӗр ӗнтӗ унта. Ӗçле-ӗçле иккен те выçӑллӑ-тутӑллӑ пурӑн. Ман пекки, кӑпӑр капӑр ӗçе тухаймасни унта выçах вилмелле-и? Ӗçлеп тесе кувӗмçӗрӗн колхос тарçи пулмалла-и вара? Апла пулсассӑн каллех вӑл пирӗн йышшисем выçӑ лараççӗ. Улталаççӗ вӑсам. Лутђӑ ан калаç та»...

Мӗн тӑватӑн ӗнтӗ... Шанђӑк çухатнӑ... Пӗр сӑмахпа, ђирленӗ вӑл. Мӗнле ђирпе ђирленнине калама пултараймастӑп та, епӗ тухтӑр мар (калаçнӑ тӑрӑшӗнђен „шанђӑксӑр" ђирпе ђирленӗ-тӗр, акӑр), çапалта ђирне камран çаклатнине лайӑх пӗлетӗп:

Кулаксен çуртӗнђен йергсе килнӗ ӑна Кулак укçа панӑ ӑна çапла калаçма.

Енли Йехремӗ.

## Çӗрпӳ районӗнђи Кӑшар кассинђе.



**Кулак:** Пађӑшкӑ, молепӑн туса памӑнши есӗ мана: турӑ йаловет претçетаттӗлӗКромӑва малалла та ӗлӗкхи пекех çемçе ђӗреллӗ туса усратӑрђӗ! Ахалӗн кашни ернерех 200—300-тенкӗ укçа çапса выртнӑшӑн мана налок тӳлеттерме пулаççӗ.

**Пуп:** Йурат̆. Туса парас.., Ей, турӑ, ӗçлӗ вырӑнта ларакан оппортунистсен ӗмӗрне вӑрӑм ту, вӗсен йӑвашлӑхне асна илсе, усал-тӗселтен (самокриттӗкӑран) хӑтарса тӑр вӗсене халӗ те кирек хӑçан та, ӗмӗр ӗмӗрех амин.

# Акрономи уђӑски

Вӑрçрӗ, питӗ хытах вӑрçрӗ халӑха, хӑвӑр пурнӑçа акрономи хушнипеле ӗçлесе аванлатмастӑр тесе, Аслӑ туçа (Çӗрпӳ р.) шкул пуçлӑхӗ Шӑпђӑк Марйи. Халӑха акрономи хушнипеле ӗçлесен мӗнле усӑ пулассине кӑтартас тесе, хӑйсем те шкул пахђинђе кӗл сапса улма лартма йышӑнђӗç.

Акӑ çурхи хӗвеллӗ, ӑшӑ кунсем персе çитрӗç. Сар хӗвелӗ ылтӑн çӑварне карсах кулат̆. Хутран та шурӑ йурӗ, хӗвел куллинђен вӑтанса макӑрат̆.

Кунсем малаллах шӑваççӗ. Вӗсен ӗçӗ çавӑ ӗнтӗ. Йерипенех çӗр-шыв та типет. Симӗс йӗп пек шӗвӗр курӑксем те шӑтса тухаççӗ. Улма лартма вӑхӑт та çитрӗ. Шкул ађисем те хавасланса пахђана 1000 тӑваткӑл талӑш çине кӗл сапса улма лартса хӑварђӗç.

— Ну, улма аван пулат̆. Халӑх пирӗнтен тӗлӗнӗ,—шухӑшлат̆ Шӑпђӑк Марйи.

Акӑ улма та шӑтса тухрӗ. Питех те лайӑх ӳсет улма. Çекçисем парки та вӑрӑм. Çак вӑхӑтра шкул пуçлӑхӗ ађасене киле салатрӗ (каникула). Улма çаплах ӳсет. Анђах... вӑл хуçасӑр, вӑл картасӑр. Памарӗç улмана урӑх ӳсмешкӗн, çеçкине çисе йађӗç выљӑхсем.

Улма ларат̆ çеçкесӗр—Шӑпђӑкӑн ӗçӗ çук!

Йапала вӗт—халӑх пӑхат̆, кулат̆.

— Ай-ай! акроном йӗрки. Улмине халӗ те купаламан!—пӗç сапсах кулат̆ халӑх. Шӑпђӑк çуркунне хӑй халӑха вӗрентнӗ, халӗ намӑс курат̆.

1000 тӑваткӑл ђалӑшран лайӑх пӑхса ӳстернӗ пулсан, сахалтан та 500 пӑт улма тухмаллађђӗ.

Екӗр, вулакан йулташсем, Шӑпђӑк пӑхса ӳстернӗ „акрономи уђаскинђен мӗн ђул тухнӑ тейӗр. Питӗ пысӑк „тупӑш" панӑ акрономи уђаски: 1000 тв. ђалӑш вырӑн çинђе улма тухнӑ... 15 пӑт.

Тӳрех каламалла—капла туни—кулаксемшӗн тутлӑ апат. Акрономи хушнине хирӗç акитатсилеме кулаксем Шӑпђӑк „акрономи уђаскийӗне" те асӑнса илӗç.

Васервасла Сӑрнай.

# Тӗрлӗ тумхахсен тӗрлӗ йуррисем

**Колхосри кахал:**



Лара, тӑра ӗҫлӗттӗм.
Нумайтарах илӗттӗм.
Хай ҫтелшђӑнӑ пулминђђӗ,—
Манӑн ӗмӗр ҫитнӗђђӗ..

**Леттун:**



Ҫитмӗл ҫиђӗ савӑт,
Кашнин каснӑ алӑк.
Ӑҫта пурнӑҫ савӑк,
Унта иртӗ талӑк...

**Вӑрман ӗҫӗнђи кахал:**



Ӗҫрен тарма кирлӗ мар,—
Анђах ҫӑка йӑвӑҫ пар.
Йуманне те касмаллах,—
Кӑштах пуртти мӑкарах...

**Савӑтри рвађ:**



Сиђӗ сехет ҫӳрӗттӗм,
Ӗҫне-тӗлне пӗлмӗттӗм.
Анђах килђӗ пӗр поххот:
Пӗтерет мур хосрасђот..

**Оппорттунис:**



Влаҫне аван тетпӗр епӗр,
Темпсем пит хӑвӑрт...
Кулак, пуйан ӗҫе йермесӗр
Йепле ҫӗн пурнӑҫ тӑвӑн?!.

**Клас тӑшманӗ:**



Йытти те, ҫынни те, ђӑххи те,—
Пурӗш те мана тӑллаҫ.
Оппорттунис хыҫӗнђе ҫеҫ хӳтӗ,
Анђах хӑйне те пӑваҫ..



**Пирӗн ђӗнӳ.**

Рапођђи, колхоҫнӗк, итлӗр!
Ревољутси катмакне илӗр!
Ҫапӑр та ватӑр тумхаха,
Таса ҫулпа утар малалла!..

Сӑвви **В. Тоймакӑн.**
Карттинккисем
**В. Филиппӑвӑн.**

# Кулăш ТĂКМАКĔ

## Ун пекки çук.

Вăрнарти столовăйри слушăшђисем апат çиме пыракансемпе пит сиввĕн калаçççĕ. Тасалăх çук.

**Йуппиттĕр.**

— Ку сивĕпе шăлкĕшленсе ларнă кăваса кăштах ăшăтмаллађђĕ.

— Сан ĕç çук. Ан кăтартса çӳренĕ пултăр кунта. Атминистратси хăй ĕçне хăй пĕлет.

— Тата калăрха: култтурлăх пури сирĕн?

— Ун пек йашка пĕçермелли протуктăсем çук пирĕн.

## Лайăхлатмалла.

Тăрăн йађейккинђе марксисла-ленинла вĕрентӳ ĕçĕ пит йапăх пырать.

— Кам пулнă Çвертлов?

— Питĕ пысăк вĕреннĕ çын.

— Ăçтан пĕлев?

— Ара хамăр йалта Иванов кăçал Çвертлăв университетне вĕренме кĕђĕ. Ун патĕнђе вĕренет ĕнтĕ вăл?

## Хосрашђут йĕрки çине куçман тсехра.

Епĕр тахçанах çиђĕ сехетлĕ ĕç кунĕ йĕрки çине куçнă. Есĕр халĕ те куçайман.

— Хăçан куçнă вара есĕр?

— Тахçанах,—ултшер минут иртерсе вунă хут тĕлĕм туртатпăр та, пĕр сехеђĕ ђакать вара.

## Пушар хыççăн.

Шупашкарти уђрештенисевђе кашнинђех вуткăвар сӳнтермелли аппаратсем пур. Анђах вĕсене мĕнле тыткаламаллине слушăшђисем пурте пекех пĕлмеççĕ,

— Ма есĕ, Петров, вуђĕ çунма пуçласассăнах окнетушшитĕлне илсе, пушара сӳнтерсе лартмарăн?

— Тытма хăрарăм. Тытсан çурăлса кайса тарĕ сирпĕнсе тухса,хама çунтарса йарасран хăрарăм.

## Туспа тус.

— Арăмпа тахçанах уйрăлмалла та.

— Ма уйрăлмастăн тата?

— Хамăр йалти Петĕр Хăритувĕнђен (кулакран, вçаткă илни çинђен калаçа парасран хăратăп.

## Автотора хирĕç.

— Мĕншĕн есĕ Автотор ђленне çырăнмастăн?

— Мĕн тăвас унта? Кăмантировккăсене çӳрекен çын мар та епĕ...

## Сарăмсăр мар пулнă иккен.

— Инкек вăл кĕтмен çĕртенех пырса ленкет.

— Мĕн пулнă?

— Инвалита тухнă.

— Кам?

— Ђăваш республĕкĕнђи инвалитсен копператсийĕ.

— Мĕнле майпа?

— Теккапĕрĕн 6-мĕш тĕлне укçа-тенкĕ пухассин 4-мĕш кварттăлти плана 25 прођђăн çеç тултарнă.

## Криçĕс.

— Пурнăç малалла шуса пырать çав. Колланти йатлă патшалăхран пĕр пусăм та кайалла йулса пымастпăр.

— Камсем?

— Епĕр, Çĕрпӳсем.

— Мĕн йевђев?

— „Правтă“ хаçатра çырнă: Колланти патшалăхĕнђи капиталиссем пахђа-çимĕççене, илекен çук пирки тинĕсе тăкаççĕ, тет.

— Ну?

— Пирĕн Çĕрпӳ хули те, капиталисăмла патшалăхсене хуса çитсе иртсе кайас тесе, криçĕс туса пăхрĕ.

— Мĕнле?

— Çĕрпӳ копсойусне пирĕн исправтом 2300 пăт ђĕкĕнтĕр (муркав) илме сĕнет. Копсойусĕ: ман ăçта сутма пĕлес ăна, тесе, ђĕкĕнтĕрне йышăнмарĕ. Криçĕс пулмари вăл?

— Криçĕсне криçĕс та, анђах производствă криçĕсĕ мар вăл—копсойусра ĕçлекенсен пуçĕсенђи криçĕс. Пуç мими криçĕсĕ пулать, епнин.

## Крылов çунатти.

Çĕнйал-Покровски (Шупашкар р.) йалсоveђĕн претсеттателĕ Крылов, йалуполномођђăннăй Иванов, Кумађков комсомолĕс кулаксене хӳтелеççĕ. Вĕсем Миђуттнĕ кулак çине хунă тырра каçарса, ђухăнсем çине валеçсе панă.

Кулак Миђуттĕн—тункатана  
Виç тĕп тымар тытса тăрать.  
Ăна тĕпрен кăкламалла,  
Вара тырпул ĕçе куçать...  
Ђухăнсем,  
Вăтамсем,  
Пĕрлешсе  
Кĕрешсен,  
Крылов йулташ çунађĕсен,  
Вĕçеслĕхĕ çухалĕ тен

## Сăнђăрласђĕ.

Вăрмар районĕнђи комсомолĕссем: Çеркейĕв К., Йекорăв, тата Крикорйĕв шкулсене пăрахса, хутпĕлменлĕхпе кĕрешес фронтран тарђĕç.

Çак виç вĕсен кайаксене  
Сăнђăрласђĕ парттă çумне!  
Опђаллă сут хĕмĕсемпе  
Вĕтер çунађĕсене.  
Летун,  
Пĕт, çун!  
Кĕрешӳсĕр пулнă тар.  
Нихçан пире кирлĕ мар.

## Касси шăтăк.

Ĕсмĕлри (Сĕнтĕрвăрри р.) пуштă уйрăмĕнђе вклатђĕксен йышĕ ӳссе пырас вырăнне, 943 тенке çите ђакнă. Кунта ĕçлекенсем ăнлантару ĕçне хак памаççĕ.

Кусем „пысăк ӳсĕм“ тăваç,  
Мĕншĕн тесен,-утти кайалла.  
Касси вĕсен—шăтăк хутаç,  
Йанă укçа йухсах тухать.

**В. Тоймак.**




Сдано в производство 14-XII 31
Подписано к печати 31-XII 31
Отв. редактор А. В. Васильев.
Выпускающ. редактор Н. Явгас

Ответлӑ ретактӑр **А. В. Ваҫҫилйӗв**

Ст. ф. Б. 200×285. Об'ем 1 п. л. 112,000 п. з. в п. л. Изд. газ. „Канаш“.
Уполн. Чувашлита № 756 Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Заказ № 1670. Тираж 7700

# Хĕрлĕ опоса кура



Вĕрсе йулакансем